28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 СЕНТЯБРӖН 30 ВЫРСАРНИКУН 190(6941) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) Обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн, ЧАССР Верховнӑй Совечӗн тата Шупашкар хула Совечӗн хаçачӗ

Çӗрулмипе пахчаçимӗç пухса кӗртесси тата государствӑна парасси—паянхи ӗç

Колхозсенче тырпул пухса кӗртес, авӑн çапас тата государствӑна тырӑ парас ответлӑ ӗçсемпе пӗрлех, çӗрулмипе пахчаçимӗç пухса кӗртес тата çак культурӑсене государствӑна парас ӗç те пуçланса кайрӗ. Колхозсемпе совхозсенче халӗ чи кӑткӑс та ответлӑ тапхӑр пырать. Çак ӗçсене пӗлсе организацилени тата вӗсене тума ялти пӗтӗм ӗç вӑйӗпе туртӑм вӑйне мобилизацилеме пӗлни çак тапхӑрти ӗçсен ӑнӑçлӑхне татса парать.

Çӗрулми кӑларса тата пахчаçимӗç пухса кӗрсе, вӗсене государствӑна парасси — паян тумалли ӗç. Кӗркуннехи çумӑрлӑ тата сивӗ кунсем çывхарни çак ӗçсене кая хӑвармасӑр халех тума васкатаççӗ.

Пирӗн республикӑри колхозсен кӑçал 31.000 гектара яхӑн çӗрулми кӑларса илмелле. Пахчаçимӗç те колхозсенче чылай пысӑк лаптӑк йышӑнать. Нумай колхозсенче çӗрулмипе пахчаçимӗçӗ питӗ тухӑçлӑ. Çӗрулмипе пахчаçимӗçе вӑхӑтра пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртсе, лайӑх пахалӑхлӑ çӗрулмипе пахчаçимӗçе çийӗнчех государствӑна парасси, кашни колхозпа совхозӑн чыслӑ тивӗçӗ тата хисеплӗ ӗçӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ тӑрӑх, пирӗн колхозсен çӗрулмие сентябрӗн 25-мӗшӗнчен пуçласа октябрӗн 5-мӗшӗччен кая юлмасӑр кӑларса пӗтермелле. Паянхи кун тӗлне Елчӗк, Шӑхасан, Чкаловски, Шӑмӑршӑ, Калинино тата ытти хӑшпӗр районсенчи колхозсем çӗрулмие çуррине яхӑн кӑларнӑ. Елчӗк районӗнчи колхозсенче çӗрулми тата пахчаçимӗç лартнӑ лаптӑк ытти районсенчи колхозсенчен пысӑкрах. Апла пулсан та, çак районри колхозсем паянхи куна 800 гектар çӗрулми, 70 гектар пахчаçимӗç пухса кӗртнӗ. Çӗрулми кӑларнипе пӗрлех ӑна кунта государствӑна парассине те начар мар организациленӗ. Ворошилов ячӗпе тӑракан, «Марс», «Хунав», «Знамя», «Смычка», «Путь Ленина», «Комбайн», «Трактор», Сталин, Пушкин ячӗсемпе тӑракан тата ытти хӑшпӗр колхозсем çӗрулми кӑларса пӗтернӗ, государствӑна памалли плана та тултарнӑ. Иртнӗ çулсенче Первомайски районри чылай колхозсем çӗрулми пӑхса çитӗнтерес тӗлӗшпе начар ӗçлерӗç, çӗрулмие вӑхӑтра пухса илеймерӗç. Кӑçал вара Первомайски районри нумай колхозсен иртнӗ çулхи урoксенчен кирлӗ пек выводсем тумалла пулнӑ тата тунӑ та. Кӑçал ӑнса пулнӑ çӗрулмине кунта нумай колхозсенче вӑхӑтра кӑларма тытӑннӑ. Иртнӗ çул юлса пынӑ «Красное Именево», «КИМ», «Заря», «Трудовик» колхозсем кӑçал çӗрулми кӑларса пӗтернӗ, государство обязательствине те чыслӑн пурнӑçланӑ. Анчах та районри 28 колхозра çӗрулми кӑларас тата пахчаçимӗç пухса кӗртес ӗç кирлӗ пек хӑвӑртлӑхпа пымасть-ха.

Çӗрулми кӑларас тата пахчаçимӗç пухас ӗç кашни районрах лайӑх пырать теме çук-ха. Улатӑр, Пӑрачкав, Сӗмӗрле, Йӗпреç, Тӑвай районӗсем çӗрулми кӑларас тата пахчаçимӗç пухса кӗртес тӗлӗшпе юлса пыраççӗ. Канаш, Куславкка, Муркаш, Октябрьски, Чурачӑк районӗсенче те çак ӗç пачах çителӗксӗр пырать. Сӗнтӗрвӑрри районӗ тырпул пухса кӗртес тата государствӑна тырӑ парас ӗçре малтисен ретӗнче пырать пулсан, çӗрулми кӑларассипе вара çителӗксӗр ӗçлет. Кунта 1358 гектар çӗрулминчен 250 гектар кӑна кӑларнӑ, пахчаçимӗç пухма та тытӑнман. Государствӑна çӗрулми парасси те начар пырать. Етӗрне районӗнче те васкамаççӗ, кунта 1817 гектартан 470 гектар кӑна кӑларнӑ. Çак районри чылай колхозсем çӗрулми кӑларма тата обязательство тӑрӑх государствӑна пама та тытӑнман. Çӗрулми кӑларма вӑхӑт çитни пуриншӗн те паллӑ. Халӗ ӗнтӗ ку ӗç тӑхтама пултарать-ха, тесе лӑпланса ларма пачах юрамасть. Вӑхӑтпа туллин усӑ курса çӗрулмипе пахчаçимӗç пухса кӗртес ӗçӗн хӑвӑртлӑхне пур майсемпе те ӳстерсе пымалла.

Кашни колхозрах государствӑна обязательство тӑрӑх парса татнӑ хыççӑн, колхозра выльӑх-чӗрлӗх валли тата вӑрлӑхлӑх юлакан мӗнпур çӗрулмие подвалсемпе хранилищесене майласа хумалла. Уйрӑмӑнах вӑрлӑхлӑх çӗрулмие сивӗ тата çумӑр пуçланиччен пухса кӗртмелле. Вӑрлӑхлӑх çӗрулми çинче чирлӗ е суранланнӑ пӗр çӗрулми те пулмалла мар.

Малта пыракан колхозсем çӗрулми валли шӑтӑксене, траншейӑсене тата хранилищесене тахçанах майласа хатӗрленӗ. Первомайски районри «Большевик», «КИМ», «Красное Именево» тата ытти чылай колхозсем те кӑçал çӗрулми валли çӗнӗ хранилищесем тунӑ, киввисене юсанӑ. Вӑрмар районӗнчи Тюлькойри «Комбинат», Шутнерпуçӗнчи «Октябрь» колхозра ферма работникӗсем ферма валли уйӑрнӑ 300 центнер çӗрулмипе тымарçимӗçе хума ферма çурчӗ çывӑхнех çӗнӗрен хранилищесем туса хатӗрленӗ. Çакӑн пек паха тӗслӗхсем ытти колхозсенче те пур.

Çӗрулмие вӑхӑтра тата пӗр тӑкаксӑр кӑларасси вӑл—пысӑк та паха ӗç. Çӗрулми кӑларнӑ хыççӑн çӗрулми участокӗсене сӳрелемелле тата сухаланӑ хыççӑн тухнӑ çӗрулмие тепӗр хут пухса илмелле. Çӗрулми кӑларас тата пахчаçимӗç пухас ӗç—паянхи ӗç. Çак ӗçе тума кирлӗ таран çынсем тата туртӑм вӑйӗ çителӗклӗ уйӑрмалла. Уйрӑм колхоз руководителӗсем çӗрулми кӑларса, пахчаçимӗç пухса государствӑна парассине тӑсса пынине туртӑм вӑйӗ çителӗксӗррипе ӑнлантарасшӑн. Акӑ Ишлей районӗнчи Крупская ячӗпе тӑракан колхозах илер. Кунта чӑн та лашасем çителӗксӗр, анчах та çак колхозра ӗçлеме пултаракан вӑкӑрсемпе тата колхозниксен ӗнисемпе пачах усӑ курмаççӗ. Кунта çаплипех майракаллӑ шултӑра выльӑхсемпе усӑ курма май çук, тесе шутлаççӗ. Ку пачах тӗрӗс мар. Шӑмӑршӑ районӗнчи чылай колхозсем лашасем вырӑнне вӑкӑрсемпе усӑ кураççӗ, кунта районӗпе 812 вӑкӑрпа ӗçлеççӗ. Елчӗк районӗнчи «Осоавиахим» колхозра 18 вӑкӑрпа çӗрулми тата пахчаçимӗç турттарас ӗçре усӑ кураççӗ. Колхоз пур ӗçе те ытти колхозсенчен маларах туса пырать. Майракаллӑ шултӑра выльӑхсемпе ӑнӑçлӑн ӗçленӗ тӗслӗхсем ытти районсенчи колхозсенче те пур. Çак тӗслӗхсем вӗсем хӑшпӗр çаврӑнӑçусӑр колхоз руководителӗсем туртӑм вӑйӗ çителӗксӗрри çине йӑвантарни пачах юрӑхсӑр сӑлтав пулса тӑни çинчен калаççӗ.

Иртнӗ çул çӗрулми тата пахчаçимӗç хатӗрлекен хӑшпӗр организацисем хӑйсем йышӑнмалли çӗрулмипе пахчаçимӗç çинчен сыхлав распискисем илсе паракансем аллинчех хӑварнӑ тӗслӗхсем пулнӑ. Çакӑн пек туни кӑçал пачах пулмалла мар. Мӗншӗн тесен вӑл государствӑна тивӗçлӗ продуктӑсене салатма тата çӗртсе яма условисем туса парать. Çак юрӑхсӑр та сиенлӗ ӗçе кӑçал пур тӗлте те сивлемелле тата ӑна тума нихӑш районта та ирӗк памалла мар. Çӗрулмипе пахчаçимӗç пухса кӗртесси ытти паха ӗçсемпе пӗр вӑхӑтра пулса иртнӗ май, колхозри ӗçсене, паллах, кӑткӑслатать, уйрӑм йывӑрлӑхсем кӑларса тӑратать. Анчах та вырӑнти парти, совет органӗсемпе колхоз руководителӗсем ӗçе организацилеме пӗлнипе тата пӗтӗм вӑя мобилизациленипе вӑл йывӑрлӑхсене çӗнтерӗç. Çӗрулмипе пахчаçимӗçе вӑхӑтра тата пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртмелле. Колхозниксемпе колхозницӑсен çӗршыври халӑха апатçимӗç çителӗклӗ парассишӗн, Тӑван çӗршыв вӑйхӑватне татах та ӳстерессишӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешмелле.

Студентсем-фронтовиксем аслӑ шкулсене таврӑнаççӗ

Хӗрлӗ Çартан çынсене иккӗмӗш черетпе киле яраси çинчен СССР Верховный Совечӗн Президиумӗ кӑларнӑ Указ тӑрӑх, çара илнӗ пирки аслӑ шкултан вӗренсе тухайман темиçе пин çын çӗнӗрен аслӑ шкулсене таврӑнаççӗ. Хӗрлӗ Çартан таврӑнакан студентсене кӗтсе илме мӗнле хатӗрленеççӗ?—тесе ыйтнӑ ТАСС корреспонденчӗ Аслӑ шкул комитечӗн председателӗнчен С. В. Кафтанов юлташран.

—Отечественнӑй вӑрçӑ пуçлансанах,—тенӗ Кафтанов юлташ,—совет студенчӗсемпе преподавателӗсем чылайӑшӗ хамӑр Тӑван çӗршыва фашистла нимӗç захватчикӗсенчен хӳтӗлеме хӑйсен ирӗкӗпе фронта кайрӗç. Тӑшман Ленинграда хӑратса тӑнӑ вӑхӑтра Ленин хулинчи университетран преподавательсемпе студентсем 2.500 çын ытла фронта кайнӑ. 1941 çулта тӑшман Мускав çывӑхне пырса тӑнӑ вӑхӑтра Мускаври Ломоносов ячӗпе тӑракан государство университетӗнчи 2.000 студента яхӑн халӑх ополченине кайнӑ. Мускаври Бауман ячӗпе тӑракан училищӗн 1.000 студентне яхӑн, Мускаври Сталин ячӗпе тӑракан физкультура институчӗн студенчӗсен виçӗ пайӗнчен икӗ пайӗ фронтра çапӑçнӑ. Аслӑ шкулсенче вӗреннӗ тата кисе çӗр çынна хастарлӑн çапӑçнӑшӑн правительство наградисене панӑ.

Хамӑр Тӑван çӗршыв умӗнче хӑйсен тивӗçне чыслӑн та хастарлӑн пурнӑçланӑ çамрӑксене йышӑнма пирӗн аслӑ шкулсем халӗ хӑйсен алӑкӗсене ӑшӑ кӑмӑлпа яр уçса яраççӗ. Кӑçалхи вӗренӳ çулӗ пуçланнӑ тӗле Совет Союзӗнчи аслӑ шкулсене Отечественнӑй вӑрçӑра пулнӑ 15.000 çынна яхӑн илнӗ ӗнтӗ.

Отечественнӑй вӑрçӑра пулнӑ çынсене аслӑ шкула илес тӗлӗшпе çӑмӑллӑхсем параççӗ. Аслӑ шкул комитечӗ аслӑ шкулсемпе техникумсен директорӗсене Хӗрлӗ Çартан таврӑнакан студентсене, иккӗмӗш курсра тата аслӑраххисенче вӗреннӗскерсене, çав шутра заочниксене те, вӗсем хӑш шкулта вӗреннӗ, çав шкулсенех илме хушнӑ. Аслӑ шкулта вырӑн пулсан тата пурӑнмалли çуртйӗр пулсан, Хӗрлӗ Çартан таврӑнакан студентсене хӑйсем пурӑнакан хулари е ытти хуласенчи хӑйсем вӗреннӗ йышши ытти аслӑ шкула та илме юрать.

Фронтра пулнӑ çынсем валли консультацисем тата хӑйне уйрӑм занятисем тӑваççӗ, кирлӗ пулсан, вӗсенчен уйрӑм вӗренӳ ушкӑнӗсем те тӑваççӗ.

Аслӑ шкулсем, профессорсемпе преподавательсем тата пирӗн пӗтӗм общественность Хӗрлӗ Çартан таврӑнакан студентсене тивӗçлипе кӗтсе илӗç, вӗсем валли аслӑ шкултан ӑнӑçлӑн вӗренсе тухма кирлӗ условисем туса парӗç. (ТАСС).

Çӗнтерӳ тырпулне типтерлӗн тыткалар, сушилкӑсене талӑкӗ-талӑкӗпех ӗçлеттерер, государствӑна типӗ тырӑ çеç парар!

Ӳкерчӗк çинче: Сӗнтӗр районӗнчи Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Е. П. Леонтьева юлташ. Вӑл ертсе пыракан колхоз государствӑна тырӑ памалли плана районра чи малтан тултарнӑ. Çӗрулми кӑларса пӗтернӗ, халӗ государствӑна çӗрулми параççӗ. Кӗрхи çӗртме тумалли плана 60 процент ытла тултарнӑ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчӗкӗ.

Государствӑна техникӑллӑ культурӑсем параççӗ

ВӐРНАР. (Хамӑр корр.). Районри малта пыракан колхозсем государствӑна техникӑллӑ культурӑсем пама тытӑнчӗç. Çапла паянхи куна Анаткас Хапӑсри Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз 1945 çулшӑн 2,77 центнер кантӑр вӑрри тата 15,47 центнер кантӑр сӳсӗ парса татрӗ. Кунсӑр пуçне государствӑна ыраш памалли шутпа йӗтӗн вӑрри 2,42 центнер панӑ. Иртнӗ çултан юлнӑ пысӑк парӑма та (кантӑр сӳсӗпе йӗтӗн вӑррине) парса татнӑ.

Çӗрпелӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоз 27,56 центнер кантӑр сӳсӗ парса, «Самолет» колхоз 10,46 центнер йӗтӗн вӑрри парса, хӑйсен планӗсене тултарчӗç. Кунсӑр пуçне, «Самолет» колхоз государствӑна ыраш памалли шутпа 10,88 центнер йӗтӗн вӑрри пачӗ.

Районри ытти колхозсенче те условисем Чапаев, Ленин ячӗсемпе тӑракан тата «Самолет» колхозсенчи пекех. Анчах вӗсем йӗтӗнпе кантӑра çапса хӑвӑртрах шыва хутса пултарас тӗлӗшпе, вӗсен вӑррипе сӳсне государствӑна парас тӗлӗшпе васкамаççӗ-ха.

Е. ВОЛКОВ.

Ӳкерчӗк çинче: Шӑмӑршӑ районӗнчи «Заря» колхозӑн старши конюхӗ Н. П. Павлов юлташ. Вӑл 10 çул хушши çак ӗçре ӗçлет. Павлов юлташ лайӑх ӗçленине пула колхоз кашни çулах лаша ӗрчетмелли плана тултарать. Кунта лашасем вӑйлӑ тата мӑнтӑр. Кашни кӗсререн пӗрер тиха илсе çитӗнтернӗ. Колхоз лаша витисене хӗллене хатӗрлесе çитернӗ.

Ӗçе тӗрӗс организацилемелле

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Районри чылай колхозсем тӗштырӑсене вырса пӗтерчӗç, авӑн çапас тата государствӑна тырӑ парас ӗç ӑнӑçлӑ пырать. Анчах та районра тырӑ вырса пӗтермен колхозсем те пур-ха. «Красный Четай», Киров ячӗпе тӑракан колхозсен вырса пӗтермен тырӑ лаптӑкӗсем 90-шар гектар ытла шутланаççӗ.

«Красный Четай» колхоз (председателӗ Шемякин юлташ) уйрӑмӑнах юлса пырать. Колхозра ӗç вӑйӗ те, туртӑм вӑйӗ те ытти колхозсенчи пекех. Вырса пухмалли тырӑ лаптӑкӗ те ытти колхозсенчен пысӑк мар. Ӗç начар пыни кунта пӗтӗмпех ӗçе организацилеме пӗлменнипе тата ӗç дисциплини чӑтма çук пачаррипе килет. Сентябрӗн 26-мӗшӗнче нарял тӑрӑх тырӑ вырнӑ çӗре 56 çын тухмалла пулнӑ, анчах та ӗçе пурӗ те 21 çын кӑна тухнӑ, вӗсем те ирхине 9—10 сехетсенче тухса хӗвел аничченех ӗçрен таврӑннӑ. Пӗрремӗш бригадӑри çынсем пӗри те тухман. Çак колхозра кӗлте кӳрсе авӑн çапасси те начар пырать. Кӗлте кӳртес ӗç юлса пынине туртӑм вӑйӗ çителӗксӗрри çине йӑвантараççӗ, çав вӑхӑтрах майракаллӑ шултра выльӑхсемпе усӑ курмаççӗ. Колхозра МТС-ан сложнӑй молотилки пур, анчах та унпа лайӑх усӑ курмаççӗ. Вӑл пилӗк кун хушши ӗçлемесӗр ларнӑ. Государствӑна тырӑ парасси те чӑтма çук юлса пырать. Плана пурӗ те 20 процент кӑна тултарнӑ. Колхоз председателӗ Шемякин çак çитменлӗхсене пӗтерес тесе нимӗн те тумасть, çаплипех: çынсем çитмеççӗ,—тесе ларать. Халӗ ӗçлемесӗр вӑхӑта иртерни сиенлӗ ӗç кӑна мар, вӑл государство умӗнче айӑпа кӗни пулать.

Çитменлӗхсене çитӗнӳсемпе витмелле мар

ШӐХАСАН. Тӑрӑнти «Красный партизан», Анат Юнтапари Молотов ячӗпе тӑракан, Пайкилтри «Активист», Шӑхасан выселкинчи «Новая жизнь», Хыçалкасри «Трактор» колхозсем сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне государствӑна тырӑ памалли çулталӑкри плана пӗтӗмӗшпех тултарчӗç. Халӗ вӗсем государствӑна планран ирттерсе тырӑ параççӗ. Çак колхозсем сентябрӗн 26-мӗшӗнчех çӗрулми кӑларса пӗтерчӗç тата государствӑна çӗрулмипе пахчаçимӗç парса татрӗç.

Çак пилӗк колхоз та государствӑна 1945 çулшӑн аш-какай, сӗт-çу, çӑмарта, çӑм, сӳс-кантӑр тата укçа-тенкӗ парӑмӗсене те парса татнӑ. «Новая жизнь» колхоз 1946 çулшӑн государствӑна 2,36 центнер, «Красный партизан» колхоз—6 центнер, «Активист» колхоз — 3,4 центнер, Молотов ячӗпе тӑракан колхоз 9 центнер аш-какай панӑ.

Сентябрӗн 26-мӗшӗнче Çӗнӗ Чалкассинчи «Прожектор», Калинин ячӗпе тӑракан, «Париж Коммуни» колхозсем те тырӑ парса татрӗç. Халӗ вӗсем хатӗрлев пунктне çӗрулмипе пахчаçимӗç леçеççӗ.

Районра нумай çул ӳсекен курӑк вӑрлӑхӗсен участокӗсене вырса пухас, çӗрулми кӑларас ӗçсем хӗрӳллӗн пыраççӗ. Паянхи куна пурӗ 11 колхоз çӗрулми кӑларса пӗтернӗ. «Трактор», «Совет», «Победа», Калинин, Молотов ячӗсемпе тӑракан колхозсем вӑрлӑхлӑх клевера вырса пӗтернӗ.

Анчах ялхуçалӑх ӗçӗсенче районри хӑшпӗр колхозсем питех те кая юлса пыраççӗ. Шӑхасанти «Красный Октябрь» колхоз (председателӗ Д. Степанов) паянхи куна çитсе те кӗрхи çӗртме тума тытӑнман, çӗрулми кӑлармаççӗ. Государствӑна тырӑ парассипе те районра чи кая юлса пырать. Ку колхоз—район центрӗнчи колхоз. Апла пулин те кунта çитменлӗхсем ытла та нумай. Колхозра авӑн çапнӑ çӗрте электричество вӑйӗпе усӑ кураççӗ. Анчах та çапнӑ тырра вӑхӑтра сӑварса тасатмаççӗ, çапнӑ тырӑ темиçе кун хушши çаплипех сапаланса выртать. Хуралсем йӗркеллӗ тӑмаççӗ. Сӑварнӑ тырра кӑнтӑрла юрнех турттармасӑр выртттараççӗ, çӗрле вара 10—11 сехетсем çитсен тырӑ турттарма тытӑнаççӗ те, ирхине 6—7 сехетченех турттараççӗ. Çаксем ӗнтӗ колхоз пурлӑхне çаратма май параççӗ. Пуринчен ытла кунта тырӑсене итем çинчен виçмесӗрех амбара яни тӗлӗнтерет. Çапла тырра колхоз кладовщикӗ В. Куропаткин амбар патӗнче çеç виççе йышӑнать. Кун пек тӗслӗхсем ытти хӑшпӗр колхозсенче те пур. Районри руководительсем тырра итем çинче виçме «тарасасем çук», тесе лараççӗ. Паллах, колхоз председателӗсем те çавнах перӗççӗ.

Матьшӳри «Молодой колхозник» колхоз государствӑна тырӑ памалли çулталӑкри плана сентябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне мӗнпурӗ те 30 процент çеç тултарнӑ. 1945 çулшӑн аш-какай, сӗт-çу парассине 20—30 процент çеç пурнӑçланӑ. Халӗ те çӗрулми кӑларма тытӑнман, кӗрхи çӗртме тума васкамаççӗ.

Юлса пыракан колхозсен малтисемпе танлашмалла.

ВАС. ВАРБУÇ.

Совет çӗршывӗ тӑрӑх

СТРАТОСФЕРӐРАН СИКНИ

Романюк парашютистӑн тӗнчери рекорчӗ

Сентябрӗн 25-мӗшӗнче паллӑ парашютист—СССР парашют спорчӗн мастерӗ Василий Романюк майор парашюта час сарса ямасӑр сикес тӗлӗшпе тӗнчере çӗнӗ рекорд тунӑ.

16 сехет те 7 минутра В. Г. Романюк майор Мускав çывӑхӗнчи пӗр аэродромран икӗ çын лармалли истребительпе вӗçсе хӑпарнӑ. Самолета летчик-испытатель Прошаков полковник ертсе пынӑ. 31 минут хушшинче истребитель 12.800 метр çӳллӗш хӑпарнӑ. Çав çӳллӗшре парашютист самолет çинчен сикнӗ.

Парашют çумӗнче ӑна хӑй тӗллӗн сарса ямалли хатӗр пулнӑ (ӑна Савичев инженер шухӑшласа тунӑ), парашют вара çӗртен 800 метр çӳллӗшре сарӑлса кайнӑ. Çапла ӗнтӗ Романюк парашюта час сарса ямасӑр 10.400 метр çӳллӗшӗнчен сикнинчен иртернӗ. Романюк майор хӑйӗн парашютне сарса ямасӑр çӗрелле 12 километр вӗçнӗ.

Вӑл çӗр çине лайӑхах анса ларнӑ.

Совет Союзӗн парашют спорчӗн мастерӗ В. Романюк майор 1.309-мӗш хут сикнӗ. В. Романюк çӗнӗ йышши парашютсене питӗ ӑста тӗпчекен чаплӑ çын пулса тӑрать. Сентябрӗн 25-мӗшӗнче рекордлӑ сикиччен вӑл нумай вӑхӑт хушши барокамерӑра тренировка тунӑ. Тренировкӑна медицина службин подполковникӗ Бондаренко ертсе пынӑ. Сакна палӑртмалла: Романюк юлташ хӑйӗн ӑшӑ тумтирӗпе тата хӑй çине сакнӑ мӗнпур приборсемпе пӗрле 120 килограмм ытла тайнӑ. 10 километр çӳллӗшӗнче летчик Цельси термометрӗпе 53 градус сивӗ пулнине палӑртнӑ.

Парашюта час сарса ямасӑр сикнин тӗнчери çӗнӗ рекордне СССР Центральнӑй аэроклубӗн спорт комиссарӗсем çырса хурӗç. (ТАСС).

Ӳкерчӗк çинче: Сухуми хулинчи Ленин урамӗ.

Х. ПАРАСКЕВОПУЛО фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

ШКУЛСЕМ ВАЛЛИ УЧЕБНИКСЕМ ПИЧЕТЛЕÇÇӖ

ЛЕНИНГРАД, сентябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Вӗренӳпе педагогика издательствин Ленинградри отделенийӗ çӗнӗ вӗренӳ çулӗ пуçланнӑ тӗле тӗрлӗ шкулсем валли 5 миллион учебника яхӑн пичетлесе кӑларнӑ. 1-мӗш класра вӗренекен ачасем валли çырнӑ учебниксене питӗ нумай пичетлесе кӑларнӑ.

«Кӗнеке çуртне» Ленинградра пурте пӗлеççӗ. Вӑрçӑ вӑхӑтӗнче вӑл ӗçлемен. Нумаях пулмасть ӗçлеме тытӑннӑ.

Çӳлти этажсенчен пӗринче редакци пӳлӗмӗсенче кӗнекесене пичете яма хатӗрлеççӗ. Унтан çав кӗнекесене хулари пур типографисене те тенӗ пекех яраççӗ. Вӑрçӑ пӗтнӗ хыççӑн çурçӗрти халӑхсен пуçламӗш шкулӗсем валли эвенк, нанаец, ханте тата ытти чӗлхесемпе учебниксем çӗнӗрен пичетлеме пуçланӑ.

Шкулсем валли кӑларакан учебниксен чылай пысӑк пайне Ленинградри чи пысӑк типографисенчен пӗринче—Максим Горький ячӗпе тӑракан «Печатный двор» ятлӑ типографире пичетлеççӗ.

АЛÇЫРӐВӖСЕНЕ ПУХСА УСРАКАН АРХИВ

Ленинградра СССР Наука академийӗн литература институчӗн алçырӑвӗсен отделӗ 30 çул хушши ӗнтӗ ӑнӑçлӑн ӗçлет. Кунта çӗршыври алçырӑвӗсене питӗ нумай пухнӑ. Çав алçырӑвсем хушшинче XVII—XX-мӗш ӗмӗрсенчи вырӑс классикӗсен, Хӗвеланӑç Европӑри литература, общественӑллӑ тата политикӑллӑ деятельсен, ученӑйсен, музыкантсен, художниксемпе артистсен ал çырӑвӗсем, çырӑвӗсемпе автографӗсем нумай.

Отечественнӑй вӑрçӑ вӑхӑтӗнче архива тыла куçарса кайса тӗплӗн сыхласа усранӑ. Халӗ пур коллекцисене те Ленинграда каялла илсе пынӑ. Кунта вуламалли зал уçнӑ, çав зала Ленинградпа Мускаври, Киевпа Свердловскри вуншар наука работникӗсем пырса ӗçлеççӗ.

Архив работникӗсем Гончаровӑн, Добролюбовӑн, Лесковӑн, Тургеневӑн, Чеховӑн наукӑллӑ обзорӗсене пичетлесе кӑларма хатӗрленӗ. XVIII-мӗш ӗмӗрти алçырӑвӗсемпе документсен çинчен калакан ӗçе çырса пӗтернӗ. (ТАСС).

Призыв пырать...

Сӗмӗрлери ремесла училищи ӗçлеме тытӑнни çулталӑк çитрӗ. Училище столяр-краснодеревщиксем тата станочниксем вӗрентсе хатӗрлет.

Иртнӗ çул училищере вӗренекенсем 22.311 тенкӗлӗх продукци туса кӑларнӑ. Вӗсен тата тепӗр çул вӗренмелле. Вӗренсе тухсан вӗсем 6—7-мӗш разрядри рабочисем пулаççӗ.

Иртнӗ çулта училище вӗренме 200 çын илнӗ. Кӑçал та çавӑн чухлех илмелле. Сентябрӗн 15-мӗшӗнче призыв пуçланчӗ. Училищене хӑйсен ирӗкӗпе кӗрес текенсем те нумай. Малтанхи кунах 67 заявлени панӑ. «Халӑх хуçалӑхне вӑрçӑ кӳнӗ сиенрен хӑвӑртрах юсаса ура çине тӑратас, çитес пилӗкçуллӑхра ӑна вӑрçӑчченхинчен те ирттерсе ярас ӗçре усӑллӑ çын пулас тесе, мана училищепе вӗренме илме ыйтатӑп»,—тесе çыраççӗ вӗсем хӑйсен заявленийӗсенче.

Училище ачасене лайӑх хатӗрленсе кӗтсе илет. Вӗренмелли корпуса, общежитисене юсанӑ. Столярнӑй, слесарнӑй тата токарнӑй мастерскойсене лайӑхлатса çӗнӗ станоксем лартнӑ. Физика, математика, черчени кабинечӗсем валли вӗренӳре кирлӗ пособисемпе приборсем нумай туяннӑ.

Пушӑ вӑхӑта вӗренекенсем хӗрлӗ кӗтесре савӑнӑçлӑн ирттереççӗ. Кунта вӗсен пианино, баян, хуткупӑс, шахматсем, хаçатсемпе журналсем пур.

Вӗренекенсем хор тата ытти кружоксенче хӑйсен пултарулӑхне аталантарса пыраççӗ. Час-часах вӗсем хулара тата çывӑхри колхозсенче концертсем параççӗ.

Тӑван çӗршыв совет çамрӑкӗсене вӑрçӑ хыççӑнхи пысӑк та хӗрӳллӗ ӗçре ӗçлеме чӗнет.

Ан. ТАНЬКОВ.

Çӗнӗ вӗренӳ çулне хатӗр

Сӗнтӗрвӑрринчи судоверфь çумӗнчи ФЗО шкулӗ сентябрӗн 15-мӗшӗнчен пуçласа çамрӑксене вӗренме илет. Верфь дирекцийӗ пулӑшнипе ФЗО шкулӗ çӗнӗ вӗренӳ çулне пӗтӗмпех хатӗрленсе çитнӗ. Теорипе вӗренмелли пӳлӗмсем, общежитисем хатӗр, кроватьсемпе çывӑрмалли вырӑнсем те çителӗклӗ.

Сӗнтӗрвӑрринчи ФЗО шкулӗ суднӑсем тӑвакансемпе платниксем хатӗрлет. Иртнӗ çулсенче вӗренсе тухнӑ ачасем халӗ квалификациллӗ рабочисем пулса лайӑх ӗçлеççӗ. ФЗО шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ Алексеев халӗ кулленхи ӗç нормине 187 процента çити тултарать, çавӑншӑн ӑна темиçе хут та преми панӑ. М. Яковлева, М. Иванова, О. Николаева та хӑйсен нормисене яланах ирттерсе тултараççӗ. Лайӑх ӗçленӗшӗн вӗсене Чӑваш республикин 25 çул тултарнӑ ятпа хаклӑ япаласем парса премиленӗ. 1945 çулта вӗренсе тухнӑ тимӗрçсем: А. Крайков, П. Соколов нормӑна 120 процента çити тултарса пыраççӗ. Лайӑх ӗçленӗшӗн вӗсене укçа парса премиленӗ. Слепневӑпа М. Мочалова нормировщиксем, Г. Михайлова автотранспорт диспетчерӗ пулса ӗçлеççӗ.

ФЗО шкулӗнче квалификациллӗ мастерсем вӗрентеççӗ. Воспитательсем ачасене культурӑллӑ пулма вӗрентеççӗ, вӗсемпе калаçусем туса ирттереççӗ, докладсем туса параççӗ тата илемлӗ литература вуласа параççӗ.

Шкул çумӗнче хор, драма, шашкӑпа шахмат кружокӗсене организациленӗ. Вӗренекенсене валли тӗрлӗ вӑйӑсем, ташӑсем, вечерсем туса ирттереççӗ.

ФЗО шкулӗсенчен вӗренсе тухнӑ ачасем вӑрçӑ хыççӑнхи пилӗкçуллӑх планне вӑхӑтра пурнӑçа кӗртес ӗçре пысӑк пулӑшу парӗç.

И. САЛАМБЕК.

Хамӑн шкулпа савӑнатӑп

1943 çулта эпӗ квалификациллӗ рабочи пулас ӗмӗтпе хамӑн ирӗкпе Канашри 6-мӗш ФЗО шкулне вӗренме кӗтӗм.

Халӗ эпӗ шкулта вӗреннӗ кунсене кӑмӑллӑн аса илетӗп. Кунта эпӗ производство тӗлӗшӗнчен чи малтанхи пӗлӳве илтӗм. Эпӗ вагонсем тӑвакан слесарьсен группинче вӗрентӗм. Практикӑллӑ пӗлӳ илнипе пӗрлех теори тӗлӗшӗнчен те чылай аталантӑм. Вӑрçӑ ӗçне те юратса вӗрентӗм. Лайӑх ӗçленине кура мана мастер помощникне лартрӗç. Ку ӗçре те эпӗ шкул руководителӗсемпе мастерӑн кӑтартӑвӗсене тӗплӗн пурнӑçа кӗртсе пытӑм. Çак вӑхӑтрах комсомола кӗрсе, çамрӑксем хушшинче ӗçлеме тытӑнтӑм. Тепӗр çулне вара мана мастера лартрӗç. Çак вӑхӑтран пуçласа эпӗ ачасене хутчен шкултан вӗрентсе кӑларатӑп. Манӑн вӗренекенсене курсанах, хам вӗреннӗ кунсем аса килеççӗ. Халӗ эпӗ ачасене производство ӗçне вӗрентес тӗлӗшпе ӗçлетӗп, вӗсене хамӑн ӗçри опытсене парса пыратӑп. Кунсӑр пуçне, эпӗ иккӗмӗш çул ӗнтӗ шкулти комсомол организацин секретарӗнче ӗçлетӗп. Пушӑ вӑхӑтра техникӑна вӗренмелли шкула тата художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗсене çӳретӗп. Хамӑн пӗлӗве хӑпартас тесе, яланах çӗнӗ хаçат-журналсем, кӗнекесем вулатӑп.

Хальхи вӑхӑтра пирӗн республикӑра çӗршер çамрӑксем ремесла тата ФЗО шкулӗсене вӗренме кӗме хатӗрленеççӗ. Вӗсене манӑн çакна калас килет: эпӗ шкулта вӗренни сая каймарӗ, эпӗ пурнӑçӑн анлӑ çулӗ çине тухрӑм. Юратнӑ квалификацие вӗренсе çӗршыва усӑллӑ çын пултӑм.

Д. МИХАЙЛОВ.

Кĕрхи тырă калчисене хĕл каçарма хатĕрленесси

Паука учрежденийĕсен тата малта пыракан колхозсен ĕçри опычĕсем тăрăх çакă паллă: кĕрхи тырăсем тухăçлă пулассипе пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех калчасем кĕркунне йĕркеллĕ шăтса аталанса юлнинчен тата лайăх хĕл каçнинчен килет. Юр айĕнче хĕл каçнă хыççăн калчасем час-часах сайраланса юлаççĕ, хăшпĕр чухне тата пĕтеççĕ те. Калчасем çĕрсе кайнипе, йĕпенсе выртнипе тата шăнса пăсăлнипе ытларах пĕтеççĕ. Çавăнпа та пирĕн кĕрхи тулăпа ыраш калчисене кирек епле çанталăка та чăтса ирттермелле тăвас пулать. Çакă ĕнтĕ калчасене кĕркунне пăхса урсанинчен нумай килет.

Кĕрхи тырă калчисене кĕркунне пăхса усрамалли ĕçсенчен пĕри вăл—вĕсене апат парасси пулать. Чи малтанах вăрлăх участокĕсенчи калчасене, кĕрхи тулла тата лайăх аталанайман ыраш калчисене апатлантарма кирлĕ. Калчасем начар шăтни тата аталанайманни çĕре лайăх сухаласа çемĕçтермен пирки, тислĕк тата ытти удобренисем тăкман пирки тата кая юлса акнă пирки пулаççĕ. Çавăн пек калчасене те апатлантарнипе тата лайăх ирĕлекен минераллă удобренисем сапса хăварнипе лайăхлатма пулать.

Кĕрхи калчасене çакăн пек йĕркепе апатлантармалла: пĕр гектар çине 1—2 центнер суперфосфатпа 1—1.5 центнер кали тăварĕ сапмалла. Вырăнти удобренисенчен кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, нумай вăхăт выртса çĕрсе вакланса кайнă тислĕк т. ыт. те сапмалла. Апатлантарнă хыççăн кĕрхи тырă калчисем чăтăмлă пулнипе тата тырпул тухăçлăхĕ ӳснипе малта пыракан колхозсен опычĕ лайăх кăтартса парать. Кĕрхи тырă калчисене кĕркунне пăхса тăрас ĕçре çавăн пекех калчасем çинчи çумкурăкне çумласа тасатни те пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Пирĕн республикăри ялхуçалăхĕнче малта пыракан çынсем—стахановецсем тата малта пыракан колхозсем—кĕрхи тырă калчисем çинчи çумкурăкне вăрçăчченхи çулсенче малтанхи хут çумлама тытăнчĕç. Çумкурăкĕнчен тасатнă кĕрхи калчасем кирек епле çанталăка та ăнăçлăн тӳссе ирттерни тата тырпул тухăçлăхĕ чылаях ӳсни те паллă пулчĕ. Анчах çак кирлĕ мероприятие пур колхозсенче те пурнăçласа пымаççĕ-ха. Хăшпĕр колхозсен руководителĕсем çав мероприятие пăсаççĕ, кĕр калчисене çумлама кирлĕ мар, тесе шутлаççĕ. Кĕр калчисене пăхса çитĕнтерменни, унти çумкурăкне çумласа тасатманни тырпул тухăçлăхне чылаях чакарать. Акă Первомайски районри Шурут ял Советĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозра калчасене кĕркуннех çумкурăкĕ пусса илнĕ пулнă. Кунта çумкурăкне тасатмасăрах хăварнă. Ыращăн тухăçлăхĕ вара питĕ начар пулнă. Ун пек тĕслĕхсене нумай çĕрте час-часах тĕл пулма пулать.

Кĕрхи тырă калчисене уйрăмах хĕл каçакан çумкурăкĕсем (шулка пуçлă писен, арăмути т. ыт. те) пысăк сиен кӳреççĕ. Çав çумкурăкĕсем калчасене аталанса тĕрекленме чăрмантараççĕ. Çавăнпа та калчасем çинчи çумкурăкне кĕркунне тĕплĕн çумласа тасатмалла.

Çавăнпа пĕрлех кĕр калчисем çинче выльăх çӳретни те пысăк сиен кӳрет. Çакна чылай çĕрте ку таранччен шута илмеççĕ. Хăшпĕр чухне, кĕр вăрăм тата ăшă килнипе, калчасем ытларах ӳссе каяççĕ. Вара, ĕлĕкхи йăлапа, калча çине выльăх кăларса ярса çĕмĕртереççĕ. Выльăхсем калчан çĕр айĕнчи пайне таптаса пĕтереççĕ, вара калча пĕр пек апатланса пыраймасть. Выльăх çавăн пекех çĕре хытарать, калча сарăлса каймалли тĕвве сиенлет, калчана тăпăлтарса кăларать. Выльăх çӳретнипе пĕр тăваткăл метрта 40 калча таран тăпăлса тухнă тĕслĕхсем те пур. Выльăха калча çинче çӳретни тырпул тухăçлăхне чакарать çеç мар, тата çанталăк лайăххах мар çулсенче ун пек калчасем пĕтĕмĕшпех пĕтсе ларма та пултараççĕ. Çавăнпа та кĕрхи тырă калчисем çинче выльăх çӳретессине татăклăнах чарса лартас пулать.

Калчасем ытлашши ӳссе кайсан, вĕсене çулма юрать. Анчах ун пек чухне çакна асра тытмалла тата çак условисене шута илмелле.

Çăралса кайса 30 сантиметр çӳллĕш ӳснĕ пулсан, калчана çулма юрать. Калча 30 сантиметр çӳллĕш ӳснĕ пулин те, çĕрме пуçланă паллăсем çук пулсан тата вăл ытлашши çăра мар, пулсан, калчана çулма кирлĕ мар. Первомайски районри «Большевик» колхозра (председателĕ Гаврилов юлташ) иртнĕ çулта кĕрхи тырăсене вăхăтра тата лайăх сухаланă çĕртме уйне акса хăварнă. Калчасем пĕр тикĕс тата час шăтса тухнă, вĕсем лайăх çитĕнсе часах 30 сантиметр çӳллĕш хăпарнă. Малтанах кунта çав калча çине выльăх яма та хăтланса пăхнă. Çапах та выльăх ярса çĕмĕрттермен. Çапла ку колхозра кăçал кĕрхи тырăсем вăйлă пулнă.

Калчана çулнă хыççăнах кĕреплепе пухса уйран пĕтĕмпех тасатмалла.

Ытла вăрăм ӳссе кайнă калчасем çĕрме тытăнсан, вĕсене сӳрелесе тухма юрать. Сӳрелени калчасене мĕн чухлĕ те пулин сайралатать те, вара вăл ытларах сутă илсе тăма пултарать.

Кĕрхи тырăсен тухăçлăхĕшĕн кĕрешес ĕçе халех тытăнмалла. Пирĕн республикăра кĕрхи тырăсем акнă лаптăк пĕчĕк мар, çавăнпа та вĕсене пăхса тăрас ĕç çине халĕ кирлĕ пек çаврăнса пăхмалла. Калчасене лайăх, тĕплĕн пăхса ӳстерсен çеç эпир 1946 çулта пысăк тухăçлă кĕрхи тырăсем вырса пухма пултаратпăр.

Доцент Т. КРУЖИЛИН.

Лондонри Совет посольствинче Молотов юлташ ячĕпе пулса иртнĕ йышăну

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕн Англири посолĕ Гусев юлташ сентябрĕн 27-мĕшĕнче Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ ячĕпе пысăк йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен конференцине пухăннă делегацисен членĕсем, Англи правительствин членĕсем тата дипломати корпусĕн членĕсем пулнă.

Хăнасем шутĕнче çаксем пулнă: Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бевин, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарĕ Бирнс, Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо, Китайăн ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Ван Ши-цзе, Англи правительствин членĕсем—финанс министрĕ Дальтон, лорд-канцлер Джоуит, ĕç министрĕ Айзекс, государство министрĕ Ноэль-Бейкер, тинĕс министрĕ Александер, сутĕç министрĕ Эллен Вилкинсон, авиаци министрĕ лорд Стэйнскэйт, почтăпа телеграф министрĕ лорд Листоуэлл, çавăн пекех тата Кентербери соборĕн настоятелĕ Хьюлетт Джонсон, Лондон хулин лорд-мэрĕ тата ыттисем те пулнă.

Йышăнура Совет Союзĕн Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи посолĕ Громыко, Англин Совет Союзĕнчи посолĕ Керр, Америкăн Совет Союзĕнчи посолĕ Гарриман, Францин Совет Союзĕнчи посолĕ Катру. Лондонри дипломати корпусĕн членĕсем, Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн конференцине кайнă совет делегацин членĕсем, Совет посольствипе совет учрежденийĕсен ответлă работникĕсем, çавăн пекех тата Англири наукăн, искусствăн тата пичетĕн паллă представителĕсем пулнă.

Йышăнура 500 хăна ытла пулнă. Йышăну туслăн иртнĕ.

ВĂТАÇĔРТИ ЕВРОПĂРИ ШАЛТИ ТРАНСПОРТ ТĔЛĔШПЕ ТУНА ОРГАНИЗАЦИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Вуннăр правительствăн представителĕсем сентябрĕн 27-мĕшĕнче Лондонра килĕшӳ тунă. Çав килĕшӳре Вăтаçĕрти Европăри шалти транспорта пăхса тăма организаци туса хурасси çинчен каланă.

Килĕшĕве çаксем алă пуснă: Великобритани ячĕпе Ноэль Бейкер, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ячĕпе Америка посолĕ Вайнант, Совет Союзĕ ячĕпе генерал-майор Бадулин, çавăн пекех тата килĕшĕве Бельги, Чехословаки, Франци, Греци, Люксембург, Голланди, Норвеги тата Югослави представителĕсем алă пуснă. Польша представителĕ хăйĕн правительствинчен тивĕçлĕ полномочи илнĕ хыççăн алă пусать.

Килĕшӳре 14 статья тата хушса çырни пур, хушса çырнинче пилĕк статья. Çав килĕшӳ тăрăх туса хунă организаци экономикăна тивĕçлĕ условисем туса парас тĕлĕшпе Европăри транспортăн пур хатĕрĕсемпе те усă курмалла пултăр тесе тăвакан ĕçсене пĕр-перинпе килĕштерсе, пĕрлештерсе тăмалла. Килĕшĕве акăлчан, француз тата вырăс чĕлхипе çырнă.

ВЕДЕМЕЙЕР ГЕНЕРАЛ ВАШИНГТОНА ПЫНА

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: американецсен Китайри çарĕсен командующийĕ Ведемейер генерал-лейтенант Вашингтона çитнĕ. Пичет представителĕсене вăл çапла каланă: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Китай çарĕсене хальхи пекех вĕрентсе пырса вĕсене снаряжени тăратасси çинчен сӳтсе-яваççĕ, тенĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ сентябрĕн 28-мĕшĕнче икĕ лару туса ирттернĕ. Ирхи ларура Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо председатель пулнă, каçхи ларура—Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бевин.

Совет каллех Германири контрольпе администраци ыйтăвĕ тăрăх Франци тăратнă меморандума сӳтсе-явнă, çавăн пекех тата заместительсем кун йĕркинче тăракан ыйтусем тĕлĕшпе тăратнă доклада пăхса тухнă. Ку ыйтусене совет иртнĕ ларусенче каярахпа пăхса тухма тесе хăварнă пулнă.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн çитес ларăвĕ сентябрĕн 29-мĕшĕнче ирхине 11 сехет те 30 минутра пулать.

ЭЙЗЕНХАУЗР ШТАБĔН НАЧАЛЬНИКĔ ГЕРМАНИН АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ОККУПАЦИЛЕНĔ ПАЙĔНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Эйзенхауэр генерал штабĕн начальникĕ Смит генерал-лейтенант хаçат представителĕсене çапла каланă: çитес эрнере Эйзенхауэр генерал Паттона хăйĕн Бавари ĕçĕсем çинчен доклад туса пама чĕнсе илет. Паттона вăл пресс-конференцире çакăн пек каланăшăн чĕнсе илет: «Нацистсен партийĕ суйлавсем вăхăтĕнчи Америкăри партисем пекех», тенĕ Паттон, «эпĕ Германире гитлеровецсене аслă вырăнсенчен кăларма кирле мар пуль тесе шутлатăп», тенĕ вăл.

Паттон çыру пичетлесе кăларнă. Унта вăл, Эйзенхауэр, гитлеровецсене вырăнтан кăларма хушнине пăхмасăрах тата Америкăн çар влаçĕсем нимĕç предпринимателĕсене, ахаль рабочи пулса ĕçлекен гитлеровецсемсĕр пуçне, пур гитлеровецсене те халех вырăнтан кăларма хушнине пăхмасăрах, çапла каланă: Америкăн Баварири çарĕсен ĕлĕк Гитлер партийĕнче тăнă суту-илӳçĕсемпе, вак промышленниксемпе тата специалистсемпе «килĕшмелле пулать», тенĕ.

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Смит генерал-лейтенантăн пресс-конференцире каланă сăмахне тĕплĕнтерех пĕлтерет. Смит унта çапла каланă: гитлеровецсене вырăнтан кăларма хушакан приказа пурнăçлас ĕçре Эйзенхауэр никама та шеллесе тăмĕ, тенĕ. Смит Паттон докладĕ Эйзенхауэра кăмăла каймасан Паттона мĕн тăвасси çинчен калама килĕшмен. Америкăн Германие оккупацилесе тăрас политикине критикăласси Паттон пресс-конференцире тухса каланă хыççăн ӳссе кайнăччĕ, халĕ вăл тата ытларах вăйлăланнă.

«П. М.» хаçат Паттона вырăнтан кăларма хушать. Вăл çапла калать: çарта хирĕçӳсем пулма пултараймаççĕ, Паттона хăйĕн вырăнчех хăварни çапла шутлама май парать. Эйзенхауэр общественноçа лăплантарас тесе кăна гитлеровецсене аслă вырăнсенчен кăларма хушнă иккен, çапла тума хушнипе пĕр вăхăтрах вăл хăйне пăхăнса тăракан çынсене çав приказа пурнăçа кĕртмелле мар тесе ăнлантарса панă иккен, тесе шутлама май парать.

«П. М.» хаçатăн корреспонденчĕ Бернштейн, нумаях пулмасть Германирен таврăннăскер, Америка офицерĕсене гитлеровецсемпе туслашнăшăн вăрçать.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ПАРИЖ, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн сентябрĕн 27-мĕшĕнче ирхине пулнă ларăвĕнче совет делегачĕ Кузнецов юлташ председатель пулнă. Чи малтан Куба делегачĕ Ласаро Пенча сăмах тухса каланă. Вăл Испанипе Аргентинăри фашистла йĕркесене сивленĕ, унтан вăл çапла каланă: пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен организацине туса хурас ĕçе малалла тăсса пыни пĕтĕм тĕнчери халăхсемшĕн тата рабочисен юхăмĕшĕн питех те сиенлĕ пулма пултарать. Малалла вăл çапла каланă: «Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ мĕнпур çĕршывсенчи фашизмпа реакцие пĕтерсе тăкас задача лартмалла. Çав федераци колонисемпе çурма колонисенче пурăнакан халăхсен экономика прогресĕпе малалла ӳссе пымалли программăсене те пурнăçа кĕртме пулăшса пымалла. Çавăнпа та ĕнтĕ пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ пĕр профсоюз ĕçĕпе кăна килĕшсе, хăйне хăй политика ыйтăвĕсенчен пăрса яма пултараймасть, пĕрре те Вальтер Ситрин ыйтнă пек тумалла мар».

Конференцин каçхи ларăвне Америка делегачĕ Хиллмэн председатель пулса ертсе пынă. Чи малтан Ирланди профсоюзĕсен представителĕ Линч сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: мана янă профсоюзсем пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацине туса хурассишĕн тăраççĕ, тенĕ. Канада делегачĕ Конройд хăйĕн сăмахĕнче пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен организацийĕ демократиллĕрех организаци пулмалли çинчен каланă. Çавăнпа та вăл организацире пур çĕршывсен представителĕсем те пулмалла, тенĕ. Конройд ĕç тăвакан комитета Канада представительне кĕртме ыйтнă.

Сири делегачĕ Охара пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен организацийĕн уставĕн проектне ырланă. Вăл ĕç тăвакан комитета пĕчĕк çĕршывсен представителĕсене ытларах кĕртес тĕлĕшпе сĕннĕ тӳрлетĕве йышăнма ыйтнă. Охара та, Инди делегачĕ пекех, федераци политика тĕлĕшпе те ĕçлеме кирлĕ, тенĕ, федераци çапла ĕçлени колонисенчи халăхсемшĕн питех те кирлĕ, мĕншĕн тесен унсăрăн профсоюзсен юхăмĕ никама пăхăнмасăр ĕçлесе тăма пултараймасть. Китай профсоюзĕсен делегацийĕн представителĕ Шу-дэ хăйĕн сăмахĕнче федераци уставĕн проектне çаплипех ырланă.

Румыни делегачĕ Апостол конференцие Румыни профсоюзĕсенче тăракан миллион çурă член ячĕпе саламланă. Апостол тĕнчери пур ĕçсыннисене те пĕрлештерме ыйтнă, мĕншĕн тесен ĕçсыннисен, кирек хăш çĕршывра пурăнаççĕ пулсан та, пурин те пĕр пек интересĕсем, вĕсем фашизма пĕтерсе лартса мирлĕ пурнăç тăвас тĕлĕшпе пурте пĕрлешсе ĕçлеме пултараççĕ.

Унтан конференцире устав проекчĕ çинчен доклад тунă Луи Сайян тухса каланă. Вăл хăйĕн докладне сӳтсе-явнă чухне тунă тӳрлетӳсемпе критикăланă вырăнсене ăнлантарса панă. Сайян пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕн пĕрлĕхне никам та критикăламаншăн кăмăллă пулнине палăртнă. Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн ертсе пыракан органĕсенче членсем ытларах пулччăр тесе каланипе Сайян килĕшнĕ. Вăл ĕç тăвакан комитет членĕсен шутне пĕчĕк çĕршывсен представителĕсене кĕртме сĕннĕ. Ситрин хăйĕн сăмахĕнче хăшпĕр профсоюз организацийĕсем ытла та ӳссе кайнине хăй ăнланайманни çинчен каланă пулнă. Сайян çакна çапла ăнлантарса панă: союзниксен çарĕсем халăхсене гитлерла пусмăртан хăтарнă хыççăн унти ĕçсыннисем хавасланса профсоюзсене кĕме пуçларĕç, тенĕ.

АРГЕНТИНĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăн çар министерстви пичетленĕ пĕлтерӳре çапла каланă: сентябрĕн 24-мĕшĕнче каçхине Раусон генерал Кордова хулинче пынă. Унта вăл ĕлĕк командир пулнă бригада генералĕпе Освальд Мартинпа пĕрле офицерсене хăйсемпе пĕрлешме ӳкĕтленĕ. Вĕсем çапла тума хăтланнине влаçсем пĕлнĕ те вара Раусона ун майлă тăракан çынсене тытса хупнă.

Унта саралнă хыпарсем тăрăх, Раусон генерал тата унпа çыхăннă çынсем правительство влаçне верховнăй суд аллине пама шутланă. Раусон генералăн халăхпа хĕçпăшаллă вăйсем хушшинче салатма хатĕрлесе хунă çырăвĕнче çапла каланă: тăватăмĕш дивизин чаçĕсем «халăх кăмăлне курса, влаçа законсăр туртса илнĕ çынсене сирпĕтсе ямашкăн алла хĕçпăшал тытрĕç», тенĕ.

Аргентинăран пĕлтернĕ тăрăх, Раусон генерал Кордова хулинче тума хăтланнă пек восстание ытти хуласенче те тăвасшăн пулнă пуль, тесе шухăшлать правительство.

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăн çар министрĕ пулса ĕçленĕ çынсем — адмирал Домек, Дэро Витола тата Касаль хаçатсенче пичетленнĕ çырура правительствăран конституциллĕ правăсемпе гарантисене халех çĕнĕрен туса хума, кĕске вăхăтрах суйлавсем туса ирттерме тата конституцире кăтартнă законсене тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыма ыйтаççĕ.

Пĕчĕк фельетон

Ка-ак? терĕ хур аçи...

— Ах, хур ури тутлă-çке!

— Эсĕ çисе курнă-и мĕн?

— Çиессе хам çимен те, пирĕн кукка районри прокурор помощникĕ çиниине курнă,—тесе калаçаççĕ колхозниксем.

Чăнах та, питĕ тутлă пулĕ çав хур ури. Ури анчах мар, какайĕ тата тутлăрах пуль. Кĕтмен çĕртен, ăнсăртран (укçасăрах эппин) çăвара ăшаланă хур какайĕ, пырса лексен... о, мĕн каласси пур!

Шăхасан районĕнчи прокурор помощникĕ Иванова пĕринче çапла Тури Сурăмри «Заря» колхоза пырать. Паллах, пырасса ĕçпе пынă ĕнтĕ вăл. Ун пирки сăмах та çук.

Шăп та шай çавăн чухне ĕнтĕ Иванова колхоз ферминчи хурсене курах каять. Самăр та шап-шурă хурсем!..

Иванова ниепле те чăтаймасть, колхоз председателĕ патне пырать те:

— Ах, сирĕн хурсем питĕ самăр-çке, Пăхма илемлĕ!—тет.

— Çапла, хурсем пур пирĕн,—ответлет ăна хирĕç председатель.

— Ытлашши çук-и унта?.. Ну, сутмалли?

— Пур. Эпир хамăр колхозниксене 300 тенкĕ çинчен паркаланă. Сире 200 тенкĕлле пама юрать. Суйласа илме пултаратăр.

— Апла пулсан, парса ярăр-ха.

— Ма парас мар, парас. Кассир патне укçа хывăр.

Ку тĕлте хăйхи Иванова кĕсъисене хыпашланçи тăвать.

— Ах,—тет вăл,—ах, эпĕ укçа чиксе тухма маннă-çке... Ну, укçине эпĕ кайран... кайран... обязательно тӳлетĕп. Шалу илсен... Çул майăн хăвăр та кĕрсе тухма пултаратăр... Тӳлетĕп, шансах тăрăр. Çапла шантарать те Иванова хур аçине хул хушшине хĕстерсе илсе тухса каять.

— Ка-ак? Как-так?—теме кăна ĕлкĕрчĕ хур аçи.

Унтанпа шăпах пилĕк уйăх иртсе кайрĕ. Анчах «Заря» колхоз хур сутнă укçана паян кун та илеймест. Ыйтса пăхсан, Иванова яланах:

— Вăт, ача, шалу илеймерĕм-ха, шалу илсенех тӳлетĕп,—тесе шантарса пурăнать. (Пилĕк уйăх хушши шалу илмен пулать те ĕнтĕ, шеремет..)

Халĕ Иванова ун çинчен пачах та манчĕ пулас. Манмасăр, хур какайне çисе яни хăçан пулать те! Халĕ çĕнĕрен хур «туянасси» çинчен шутламалла вĕт! «Заря» колхозри йĕплĕ чĕлхесем халĕ юрă та хывнă ĕнтĕ.

«Ка-ак? терĕ те хур аçи, тăста кайса сухалчĕ»,—тесе юрлаççĕ вĕсем.

Шăхасан районĕнчи колхозсенче çакăн пек йĕркепе ялаласем «туянасси» йăлана кĕнĕ текен хыпарсене час-часах илтме пулать. Çав Иванова юлташах тата Сител колхозĕнчен промтоварсем, Матьшури «Молодой колхозник» колхозран 2 пăт тулă сăнахĕ илсе кайса, укçине халĕ те тӳлемени çинчен те пĕлетпĕр эпир. Районри ытти хăшпĕр работниксем енчен те кун пекки час-часах пулкалать.

— Ка-ак?—тесе кикалатаççĕ «Заря» колхозăн хурĕсем, хăйсен тусĕ вăхăтсăр пĕтнишĕн хурланса.

Степан АСЛАН.

«ÇАМРĂКСЕН СОЮЗĔСЕН ЗАДАЧИСЕМ ÇИНЧЕН»

Владимир Ильич Ленин 1920 çулхи октябрĕн 2-мĕшĕнче çамрăксен союзĕсен задачисем çинчен тухса каланăранпа 25 çул çитнĕ май, Чăвашсен Государство Издательстви çав историллĕ документа уйрăм кĕнеке туса кăларать. Кĕнекен тиражĕ 3000 экз. пулать.

«ИВАН НИКУЛИН, ВЫРĂС МАТРОСĔ»

Л. Агаков писатель вырăс писателĕн Л. Соловьевăн «Иван Никулин, вырăс матросĕ» ятлă повеçне чăвашла куçарнă. Ку повеçре Хура тинĕс морякĕсем нимĕçсен тылĕнче паттăррăн кĕрешнине кăтартса панă.

Ответлă редактор заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

Шупашкарти 11-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ вĕренме илет.

ФЗО шкулĕ электричество промышленноçĕ валли çак специальноçсемпе ĕçлекен квалификациллĕ рабочисене вĕрентсе хатĕрлет: токарьсене, слесарь-монтажниксене, слесарь-сборщиксене, станоксем юсакан тата лартакан слесарьсене, плотниксене.

ФЗО шкулне 15 çултан пуçласа 18 çула çитнĕ çынсене пурне те испытанисĕрех илеççĕ.

Вĕренме илнĕ çынсене кунне виçĕ хут укçасăрах апатлантараççĕ, çуллахи тата хĕллехи тумтирсем параççĕ, кĕпе-йĕм тата выртса тăмалли хатĕрсем параççĕ, культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен пулăшаççĕ. Ĕç укçине кашни вĕренекене ĕçне кура параççĕ.

Заявленисене октябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленире мĕнле специальноçа вĕренме шут тытнине кăтартмалла. Заявленипе пĕрле çакăн пек документсем ямалла: 1) хăçан ăçта çуралнине кăтартакан свидетельство, 2) ăçта мĕçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, 3) сывлăх çинчен калакан справка. Ĕçлесе тăнă вырăнта апат-çимĕç илсе тăма пăрахнине кăтартакан справкăна кашни хăй пырсан кăтартать.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Заводская, 34.

Çĕнĕ сăра завочĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Сентябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче Сĕнтĕрвăрринчи сăра завочĕ ĕçлеме пуçланă. Заводра 4 пин литр сăра туса кăларнă.

Завода Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче тума тытăнса, 1945 çулта туса пĕтернĕ. Икĕ сменăпа ĕçлесе, завод талăкра 2.500 литр сăра туса кăларма пултарать.

Завод директорĕ Трошин юлташ каланă тăрăх, завода ĕçлеме чĕртавар тата рабочисем çителĕклĕ, анчах заводăн транспорт çукки ĕçе чăрмантарса тăрать. Çавăн пирки те хĕл валли вутă хатĕрлемен.

Районри суту-илӳ организацийĕсем (Райпотребсоюз, Горпо т. ыт. те) сăра сутассине организацилес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Пирвайхи хут туса кăларнă сăра потребительсене кĕтсе халĕ те пичкесенчех выртать.

И. САЛАМБЕК.

Тĕнчери лару-тăру

Лондонра Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ хăйĕн ĕçне туса пĕтерме пуçларĕ.

Икĕ эрне ытларах ĕçлесе Совет питĕ паха ыйтусене пăхса тухрĕ. Çав ыйтусен шутне Италипе тумалли мирлĕ договор тата унăн колонийĕсемпе мĕн тумалли ыйту, Италипе Югослави чикки ыйтăвĕсем, Финляндипе, Румынипе тата Болгарипе тумалли мирлĕ договорсен проекчĕсем кĕреççĕ.

Кунсăр пуçне, Совет Австрие нумай вăхăт хушши апат-çимĕçпе тĕрлĕ таварсем парса тăрас ыйту тĕлĕшпе тунă килĕшĕве, Европăри шалти шыв çулĕсенче уйрăм режим çинчен тунă положение, гитлеровецсем хăваласа кайнă совет гражданĕсене ют çĕршывсенчен Совет Союзне хăвăртрах таврас ыйтăва, вăрçă тăкакĕсене тӳлеттерес тĕлĕшпе Франци делегацийĕ панă меморандума тата Германири контрольпе администраци ыйтăвĕсене пăхса тухнă.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ пăхса тухнă çакăн чухлĕ ыйтусем пирки, паллах, ют çĕршыв хаçачĕсенче питĕ нумай çырнă.

Ют çĕршыв хаçачĕсенче Министрсен совечĕн канашлăвĕ çинчен иккеленсе çыракан хаçатсем те сахал мар. Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн канашлăвĕ çинчен хăшпĕр корреспондентсем Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен президентне Трумэна ыйту пама та хăйнă. Пресс-конференцире Трумэн çак ыйтусем çине ответ панă чухне канашлу итогĕсем çинчен иккеленнине кăмăлламан. Трумэн çапла асăрхаттарнă: «Корреспондентсен совет ăн отчетне пичетлесе кăларичченех тăхтанă пулсан лайăхрах пулĕччĕ».

Паллах, Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕ умĕнче пысăк та кăткăс ыйтусем тăнине пурте пĕлеççĕ. Англире тухакан «Дейли экспресс» хаçат ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн ĕçĕ çинчен çырнă май, çапла палăртнă: мирĕн халь хывса хăварнă никĕсĕ нумай çулсем хушши çирĕп тытăнса тăмалла. Вăрçăра çĕнтерӳ тумашкăн пире ултă çул кирлĕ пулчĕ, тесе çырать хаçат. Конференци вара çак ултă çул хушши пынă йĕркесĕрлĕхе темиçе кун хушшинчех пĕтерессине кĕтме те кирлĕ пулман. Конференцире тĕп ыйтусене пăхса тухнă, вĕсем çине кам мĕнле пăхнине птленĕ. Халĕ ĕнтĕ кашни çĕршыв тепĕр çĕршывăн шухăшне пĕлет. Çакă вара малашнехи ăнăçлăхсен тĕп условийĕ пулса тăрать.

Анчах та вăрçă вăхăтĕнче аслă державăсем пĕр-перинпе килĕштерсе ĕçлени çĕнтерме пултарайман йывăрлăхсем çуккине кăтартса парать. Паллах, вăрçă хыççăнхи йывăрлăхсене те çĕнтерсе çирĕп йĕрке туса хурĕç. Çакна тумашкăн пĕртен-пĕр çул кăна пур. Вăл çул—виçĕ державăн Крымри тата Берлинри конференцийĕсен решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыни пулса тăрать.

* * *

Кăçалхи сентябрĕн 25-мĕшĕнче Венгрири союзниксен контроль комиссийĕн председателĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Ворошилов, Совет правительстви хушнипе, Венгрин премьер-министрне Б. Миклоша Совет Правительстви Венгрипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пуçласа пĕр-перине патне посланниксем яма сĕннине каласа панă. Заявленире çапла каланă: Совет Правительстви çакна Венгри союзниксене гитлерла Германие хирĕç вăрçма пулăшнине шута илсе тата 1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче перемири çинчен тунă килĕшĕве Венгри пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынине шута илсе йышăнчĕ. Совет Правительствин çак ĕçĕ демократиллĕ аталану çулĕ çине тăнă Венгришĕн питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Венгрири Бела Миклошăн нациллĕ вăхăтлăх правительствине 1944 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче Дебрецен хулинче Венгрири вăхăтлăх нациллĕ пуху туса хунине пĕлеççĕ. Çав Пухура Венгрири хуласемпе ялсенчи халăх суйласа янă делегатсем пулнă. Çавăн пекех унта демократиллĕ пур партисен, профсоюзсен, хулапа ялти самоуправленисен тата ытти организацисен представителĕсем те пулнă. Бела Миклош правительствине демократиллĕ пур партисен—хресченсен нациллĕ партийĕн, социал-демократсен, коммунистсен тата вак çĕр хуçисен партийĕн представителĕсем кĕреççĕ. Вĕсем «Венгрири нациллĕ никама пăхăнманлăхăн фронтне» туса хунă.

1944 çулхи декабрĕн 22-мĕшĕнче Венгрири нациллĕ вăхăтлăх правительство Германие хирĕç вăрçă пуçласа ячĕ те хăй умне çĕршыва демократилле улăштарас задачăна лартрĕ. Фашистсен пур партийĕсемпе çар организацийĕсене те салатса янă. 1945 çулхи март уйăхĕнче правительство çĕр реформи çинчен декрет йышăннă.

Çав декрет ĕнтĕ Венгрири вăхăтлăх правительствăн чи паха мероприятийĕсенчен пĕри пулса тăрать. Çĕр ыйтăвĕ çĕршывра яланах питĕ кăткăс ыйту пулнă, Венгрири реакци ăна татса парассине пур майсемпе те чарса тăнă. Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, 1938 çулта Венгрири 16.000 помещик мĕнпур çĕрĕн çуррине яхăн тытса тăнă. Çĕрĕн тепĕр çур пайĕ çинче вара 2.100.000 хресчен пурăннă.

Çĕр çинчен калакан декрета йышăннă хыççăн Венгрире хресченсене валеçсе памалли çĕр 3.600.000 хольд пулнине шута илнĕ (пĕр хольдра 0.57 гектар). Çĕрĕç министерстви пĕлтернĕ тăрăх, 1945 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕр ыйтакан 682.000 çĕрсĕр тата сахал çĕрлĕ хресчен хуçалăхĕнчен 635.000 хуçалăха çĕр валеçсе панă. Çав хресченсене 3.350.000 хольд (икĕ миллион гектара яхăн) çĕр валеçсе панă.

Çĕр реформи Венгрири хресченсен пурнăçне тĕпренех улăштарчĕ. Çав валеçсе панă çĕрĕн тĕп пайне çĕрсĕр тата сахал çĕрлĕ хресченсем илнĕ. Кашни хуçалăх вăтамран 4,5—5,5 хольд çĕр илнĕ.

Кăçалхи сентябрь уйăхĕнче Будапештра Венгрири нациллĕ вăхăтлăх пухун сессийĕ пулса иртнĕ. Венгрие пĕтĕмпех ирĕке кăларнă хыççăн Будапешт хулине унăн тавралăхĕнче тата Дунай тăрăхĕнчи облаçсенче суйлавсем пулса иртнĕ. Венгрин нациллĕ вăхăтлăх пухăвĕнче халĕ 498 депутат шутланать.

Нациллĕ вăхăтлăх пухура премьер-министр Бела Миклош вăхăтлăх правительство ĕçĕ çинчен доклад туса панă. Пуху вара Бела Миклош правительствине шанса малалла ĕçлеме хушнă. Пуху вăхăтлăх правительствăн пахарах декречĕсене, вăл шутрах çĕр реформин декретне те сӳтсе-явса çирĕплетнĕ. Нациллĕ пуху 1945 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче перемири çинчен тунă килĕшĕве тăвăллăн алă çупса пĕр саслăн ырланă.

Нациллĕ пуху суйлав законне çирĕплетнĕ. Çак закон Венгри историйĕнче чи демократиллĕ суйлав законĕ пулса тăрать. Вăл граждансене пурне те суйлав прави парать, çĕршыври çарпа политика тĕлĕшĕнчи преступниксене çеç суйлава хутшăнма чарать. Закон тăрăх суйлава пурте хутшăнса, тӳрремĕнех, вăрттăн тата пĕртан сасăласа ирттермелле. 20 çула çитнĕ Венгрин пур гражданĕсем те суйлава активлăн та, пассивлăн та хутшăнма пултараççĕ. 20 çула çитнĕ çынсене суйлав прави паннипе пула Венгрири суйлавçăсен хисепĕ 5.500.000 çынна çитнĕ. Парламент суйлавĕсем 1945 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕнче пулса иртмелле.

Çак фактсем ĕнтĕ Венгрири демократиллĕ вăйсем тĕрĕс çул çинче тăнине кăтартса параççĕ.

Г. ЛЕНСКИЙ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5 Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97. ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабсельнорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00043 Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. 6. 53 42 п. л. Тираж 16.000 экз.